Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене пухать

35 (7996) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи çу (май) уйăхĕн 12-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Михаил Игнатьев пирĕн районта пулчĕ



***Çак кунсенче Аслă Отечественнăй вăрçăра Аслă Çĕнтерӳ тунăранна 67 çул çитнине паллă турăмăр. Муркашра пурăнакан А. Капитоновшăн вăл уйрăмах асра юлчĕ. Юнпа, хаяр çапăçусемпе çĕнсе илнĕ черетлĕ Çĕнтерӳ кунне Алексей Капитонович хăйĕн мăшăрĕпе Анастасия Ефимовнăпа çĕнĕ 2 пӳлĕмлĕ хваттерте кĕтсе илчĕ. Вăрçă ветеранĕсемпе тăлăх арăмсене, вĕсен çемье членĕсене çурт-йĕрлĕ пулма пулăшакан Указпа килĕшӳллĕн илчĕç ăна Капитоновсем.***

***Тепĕр асра юлмалли самант вăл – уяв умĕн майăн 5-мĕшĕнче Капитоновсем патĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев пулни. Михаил Васильевичпа пĕрле унта Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ А. Самойлова, район пуçлăхĕ – депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ И. Николаев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н. Петрова, район администрацийĕн ытти яваплă ĕçченĕсем пулчĕç.***

Республика Пуçлăхĕ М. Игнатьев Алексей Капитоновичпа мăшăрне Аслă Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе ăшшăн саламларĕ. Хăй ятĕнчен вăрçă ветеранне сехет парнелерĕ. «Çемье архивĕнче упрантăр вăл. Мăнукăрсене сирĕн паттăрлăхăр çинчен аса илтерсе тăтăр. Вĕсем те сирĕн пек маттур та паттăр çынсем пулса ӳсчĕр», – терĕ Михаил Васильевич.

Капитоновсемшĕн Çĕнтерӳ кунĕ тепĕр уявпа – çемье уявĕпе – асра юлать. Майăн 10-мĕшĕнче Анастасия Ефимовнăпа Алексей Капитонович пĕрлешнĕренпе 62 çул çитрĕ. Республика Пуçлăхĕ Анастасия Ефимовнăна чĕрĕ чечек çыххи, мăшăра çемье ăшшине упрама вырăн хатĕрĕсем парнелерĕ. Нумай çул килĕштерсе сывлăхпа пурăнма сунчĕ.

– Нихăçан та Республика Пуçлăхне çапла çывăх куратăп тесе шутламанччĕ. Халь савăннипе хама уйăрса панинчен тепĕр 2 çулне ытларах пурăнма та хатĕр, – кăмăллăн калаçать хĕрарăм.

Михаил Васильевич мăшăрсен пурнăç условийĕсемпе паллашрĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

## Тайма пуç сире, ветерансем!

**Аслă Çĕнтерӳ митингĕнчен**

***Çак хаваслă уяр куншăн, хĕвеллĕ янкăр тӳпешĕн, ирĕклĕ те мирлĕ пурнăçшăн çĕре çити тайма пуç сире, ветерансем! Çак сăмахсем янăрарĕç Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунăранна 67 çул çитнине халалласа ирттернĕ митингра майăн 9-мĕшĕнче район центрĕнче. Уяв митингне Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем, вăрçăра вилнĕ салтаксен тăлăх мăшăрĕсем, тыл ĕçченĕсем, ĕç коллективĕсемпе шкул ачисем пухăнчĕç.***

Чăннипех хакла ларнă иртнĕ вăрçă. 9845 çынна ăсатнă Муркаш çĕрĕ фронта. Кашни çемьенех пырса тивнĕ хуйхăпа асап. 5491 салтак вăрçă хирĕнчех пуçĕсене хунă. Чылайăшĕ киле таврăнсан та вăрçă суранĕсене пула нумай пурăнайман, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Митинга уçнă май Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин çавна палăртрĕ. Муркаш ял тăрăхĕнчен кăна вăрçăна 468 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 235 çынна шăпа каялла таврăнма пӳрмен. Паянхи куна ял тăрăхĕн территорийĕнче 5 ветеран пурăнать.

Митингра пĕр минут хушши шăп тăрса вăрçăра вилнисене асăнчĕç.

Пухăннисене Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 67 çул çитнĕ ятпа район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев саламларĕ. «Пирĕн асаттесемпе аттесем тĕнче историйĕнче пулман çак хăрушă вăрçăра хăйсен пурнăçне шеллемесĕр çапăçса тăшмана пуçĕпех çапса аркатма пултарнă, тыл ĕçченĕсем хăйсен хастар ĕçĕпе Аслă Çĕнтерӳ кунне çывхартма пулăшнă. Çĕре çити пуç тайса тав сăмахĕ калатпăр эпир паян сире», – терĕ вăл.

Вăхăт хăйĕннех тăвать. Паян районта 75 вăрçă ветеранĕ, вĕсемпе танлаштарнисем 7 çын, Ленинград блокадинче пулнисем 2-ĕн, вăрçăра вилнĕ салтак мăшăрĕсем 6-ăн, тыл ĕçченĕсем 1426 çын пурăнаççĕ.

Çĕнтерӳ кунĕнче Муркаш – Васкасси маршрутпа велосипедистсен ăмăртăвне иртгерессси йăлана кĕнĕ. Сăмах май ăна пуçласа вăрçă ветеранĕ П. Никонов йĕркеленĕ. 28-мĕш хут иртерекен ăмăртăва хутшăнакан велосипедистсене Н. Никитин старт пачĕ.

Аслă Çĕнтерӳ уявĕ ячĕпе Чăваш Республикин Çар комиссариачĕн Муркаш тата Элĕк районĕсенчи пайĕн пуçлăхĕ А. Кочуров саламланă май паян çар ретне тăракансем те çĕршыв хӳтĕлевçисен мухтавлă традицийĕсене малалла тăснине палăртрĕ.

Иртнĕ вăрçă çулĕсене аса илнĕ чухне Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕ Н. Стрельцов, тыл ĕçченĕ тата ĕç ветеранĕ Г. Толстова хăйсен куççулĕсене тытса чарайманарĕç.

Вăрçă ветеранĕсене, салтак мăшăрĕсене, тыл ĕçченĕсене, «вăрçă ачисене», пухăннисене Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин директорĕ Н. Ванеркин, Раççей Пенсионерĕсен союзĕн районти уйрăмĕн председателĕ, Муркаш районĕн хисеплĕ гражданинĕ В. Краснов, воин-интернационалист С. Черкашин, «Единая Россия» политика партийĕн районти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ Ю. Иванов, Турă амăшĕн Владимирти турăшĕн чиркĕвĕн настоятелĕ Федор атте саламларĕç, Аслă Çĕнтерӳ кунĕ чăннипех те пĕтĕм халăх уявĕ пулнине палăртрĕç, ветерансене тав сăмахĕ каларĕç.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

**Çур аки – 2012**

## Уй-хир ĕçĕсем сарăлаççĕ

Çу уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне районти пур хуçалăхсенче те çурхи ака-суха ĕçĕсем пуçланнă. Уй-хир ĕçĕсем паян кунсерен сарăлса пыраççĕ.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче пурĕ 1000 тоннăна яхăн вăрлăх имçамланă.

Тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем çĕр улми вăрлăхне çителĕклĕ майлах (5300 тонна) суйласа яровизацилеме кăларнă.

Нумай çул ӳсекен курăксене 500 гектара яхăн, кĕрхи культурăсене 871 гектар (38 процент) çинче апатлантарнă.

Хуçалăхсем ĕнерхи кун тĕлне çуртрисем акма 5 пин гектара яхăн (план 15181 гектар) çĕр хатĕрленĕ. Унăн çуррине майлă акнă та ĕнтĕ. Ака ĕçĕсем «Восток», «Путь Ильича», Чкалов яч. хис., «ВаСем», «Колос», «Бездна» хуçалăхсемпе А. Пихтеров, А. Толстов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ăнăçлăрах пыраççĕ.

Районĕпе илсен 200 гектара яхăн пĕр çул ӳсекен курăксене акса хăварнă.

**Хамăр инф.**

**Ачасен канăвĕ**

## Лагерьсенче икĕ пин ытла ача канĕ

Çуллахи вăхăтра шкулсем çумĕнче йĕркелекен лагерьсенче чылай ача канса сывлăха çирĕплетме тата хăй тавра курăмне аталантарма пултарĕ. Район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене çуллахи каникул вăхăтĕнче кăçал пурĕ 919 ача, профиль лагерĕсене – 1350 ача йышăнаççĕ.

Сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене кĕçĕн классенче вĕренекенсене ытларах явăçтарма палăртнă. Лагерьсем пĕр сменăпа ĕçлеççĕ – 21 ĕç кунĕ: июнĕн 1 – 26-мĕшĕсем. Кунне пĕр ачана апатлантарма 65 тенкĕ уйăраççĕ.

Профиль лагерĕсем вара 10-шар ĕç кунĕпе танлашакан икĕ сменăпа ĕçлеççĕ: июнĕн 1 – 13-мĕшĕсем тата июнĕн 14 – 25-мĕшĕсем. Лагерьсем тĕрлĕ енлĕ пуласси паллă: экологипе интересленекенсен, спорта юратакансен, техникăна кăмăллакансен, историпе кăсăкланакансен лагерĕсем тата ытти тĕрлисем.

Майăн 2-мĕшĕнче шкулсем çумĕнчи лагерьсен ертӳçисемпе вĕренӳ иртнĕ ĕнтĕ. Майăн 25-мĕшĕччен вĕсен лагерĕн ĕç тата аталану программине хатĕрлесе экспертсене хаклама памалла. Çакăн хыççăн кăна шкул çумĕнчи лагерьсене ĕçлеме ирĕк параççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Саламлатпăр**



От всего сердца поздравляем с юбилеем дорогую, родную, неповторимую и любимую маму, сестру и невестку **СЕМЕНОВУ Татьяну Валентиновну**. Мы желаем тебе оставаться такой всегда, не знать печали, скуки и грусти. Пусть жизнь дарит тебе здоровье и успех, покой, уверенность и внутреннюю гармонию. Пуст с каждым днем добавляется не возраст, а жизненный свет, везение, оптимизм и вера в лучшее. С праздником тебя!

**Дочь, сын, невестка, сестры и семьи Семеновых.**



Муркаш районĕнчи Çурлатри ялĕнче пурăнакан хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, хуньстарике – **Николай Андреевич ЗАМЯТИНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, вăрăм кун-çул, телей сунатпăр. Тавах сана эс пурришĕн, сан ырă кăмăлушăн, пире савăнтарса пурăннишĕн.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕ, çывăх тăванĕсем.**

**Çырăнтару – 2012**

### ХАКЛĂ ВУЛАКАНĂМ!

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 204 тенкĕ.**

**Вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм хальхи пек 6 страницăпа мар, 8 страницăпа тухма пуçлать.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

**Майăн 15-мӗшӗ – Пӗтӗм тӗнчери çемье кунӗ**

# Чи пӗлтерӗшли çемьери хăтлăх



*Паянхи кун тӗлне районта нумай ачаллă 393 çемье шутланать, вӗсенче 1246 ача пурăнать. 3 ачаллă 338 çемьере – 1014 ача. 4 ачаллă 46 çемьере 184 ача ӳсет, 5 ачаллă 8 çемьере – 40 ача. Çавăн пекех районта сакăр ачаллă пӗр çемье пур.*

*Майăн 11-мӗшӗ тӗлне районта кăçал 144 ача çуралнă. Вӗсенчен 31 ача тӗлӗшпе Чăваш Республикин Президенчӗн Указӗпе килӗшӳллӗн уйăракан 100 пин тенкӗ виçеллӗ амăшӗ капиталӗн сертификачӗпе усă курма ирӗк пур. Хальлӗхе ăна 20 çемье илнӗ те ӗнтӗ. 2007 çултанпа вăйра тăракан амăшӗ капиталӗн сертификатне паянхи кун тӗлне районти 1146 çемье тивӗçнӗ, 81-шӗ кăçал илнӗ.*

*Çурт-йӗр условийӗсене йӗркелессинче те нумай ачаллă çемьесене патшалăх пысăк пулăшу уйăрать. Хальлӗхе районта çакăн йышши çичӗ çемье черетре тăрать. Кунта пилӗк е ытларах ачаллă çемьесем кӗреççӗ. 2010 – 2011 çулсенче нумай ачаллă икӗ çемье 4355,0 пин тенкӗпе хваттер туяннă, çурт-йӗр çӗкленӗ çӗрте усă курнă.*

*Çак сăн ӳкерчӗкре эсир Муркаш ял тăрăхӗнчи Лоцмановсен туслă та пултарулă çемйине куратăр. Палăртма кăмăллă, вӗсене район тата республика шайӗнчи тӗрлӗ мероприятире малтисен ретӗнче тăтăшах курма пулать. Вӗсем район чысне аяçлă хӳтӗлеççӗ. Мӗн ачаллах спортпа туслă мăшăр ачисене те çавнах хăнăхтарать. Лоцмановсем обществăлла ӗçсенче те питӗ активлă. Пӗтӗм тӗнчери çемье кунӗ ячӗпе вара вӗсене çирӗп сывлăх та аяçу сунас килет.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Михаил Игнатьев пирӗн районта пулчӗ

**(Вӗçӗ. Пуçл. 1-мӗш стр.)**

– Хваттере куçсан лайăх пурнăç мӗне пӗлтернине, чăннипех те, аялантăмăр, – тет А. Капитонова.

Михаил Васильевич вăрçă ветеранӗпе тыл ӗçченӗн сывлăхӗн медицина ӗçченӗсем интересленнипе кăсăкланчӗ.

– Кашни çул больницăра выртсах сипленетӗп, – саваннине пытараймасть Анастасия Ефимовна. – Мăшăр пурăнать те ман та унран юласах килмест.

91 çулхи Алексей Капитонович вара вăл ыратать те ку ыратать тенине илтмен. Ватă разведчик ытлашши сăмах та вакламасть.

– Разведкăна пакăлтатма юратакансене ямаççӗ унта, – шӳтлет хăй тепӗр чух.

Темиçе çул каялла кăна велосипедпа çӳреме пăрахрӗ вăл. Ун чухне уттине те çулатчӗ, хăех турттаратчӗ. Турри те Аслă Çӗнтерӳшӗн тав тăвать, тейӗн ăна.

Вăрçă çулӗсене те паянхи пекех астăвать вăл. 1940 çулта çара кайнăскерне Турци чиккине хӳтӗлеме куçараççӗ. 1941 çулта Новороссийска яраççӗ. Унта çар вăрттăнлăхӗсене алла илнӗ хыççăн – тӳрех фронта. Вăрçăра разведчик пулса çапăçать вăл. Дон урлă каçнă чухнехи хаяр çапăçусене, Сталинграда ирӗке кăларнă çӗре хутшăнать, йывăр аманать. Çапăçури паттăрлăх çинчен халь ăна 1, 2 степень Аслă Отечественнăй вăрçă орденӗсем, «Паттăрлăхшăн», «Сталинграда хӳтӗленӗшӗн» тата ытти юбилей медалӗсем аса илтереççӗ.

Вăрçă хыççăн вара 18 çул Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра кӗтӳçӗ пулса ӗçлет, 10 çул председателе турттарать.

Анастасия Ефимовна вара ӗмӗрӗпе йăла службинче, Тăван хуçалăхра вăй хунă. Иккӗшӗ 3 ывăл çуратса ура çине тăратнă. Паян вӗсен 7 мăнукпа 4 кӗçӗн мăнук.

Анастасия Ефимовна хăнасене кукăль астивме сӗнчӗ. Чей ӗçнӗ хушăра кăмăллă калаçу малалла пычӗ: ачасене воспитани парасси çинчен, район ӗçӗ-хӗлӗ çинчен. Район администрацийӗн пуçлăхӗ Р. Тимофеев çак кунсенче тепӗр 6 çамрăк çемье çурт лартма паракан свидетельствăна илни, унпа вӗсем çав тери кăмăллă пулни çинчен каласа пачӗ.

Михаил Васильевич хăйӗн ачалăхне аса илчӗ. Шкула кайиччен ирхине 700 метр инçӗшӗнче вырнаçнă çăл патне шыв ăсма кайса килнине паян та лайăх астăвать вăл.

– Унтанпа пурнăç палăрмаллах лайăх енне улшăнчӗ çав, – килӗшет вăл Ростислав Николаевичпа. Вăрçă ветеранӗсене хваттерсемпе тивӗçтерес ыйту пирки палăртрӗ. «Çулталăк вӗçлениччен ку ыйтăва пӗтӗмпех татса паратпăр. Вӗсем пурте пурнăçпа савăнса пурăнма тивӗçлӗ», – терӗ Республика Пуçлăхӗ.

Муркаш районӗпе илес пулсан вара тата 24 ветеранпа вилнӗ ветерансен мăшăрӗсем черетре тăраççӗ.

Çакна каласа хăвармалла. Михаил Васильевич Муркаша çитсенех Парк ураменчи картишне тирпейилем кӗртнипе интересленчӗ. 2-мӗш номерлӗ çурта тăвакансем туса çитереймен хăш-пӗр кăлтăксене те курмăш пулмарӗ. Капитоновсемпе сывпуллашса тухнă хыççăн çамрăк ача амăшӗсемпе, çамрăксемпе калаçрӗ. Тепӗр хут территорие тирпей-илем кӗртес ыйту патне таврăнчӗ. Çурт умӗнчи пирус тӗпӗсем мӗнле пăхас мар тесен те курăнаççӗ çав. Шел, çак çуртра пурăнакансем юр кайнă хыççăн та вӗсене шăлса тирпейлеме вăхăт тупайман.

Республика Пуçлăхӗ картишне улмуççисем, чечексем лартма сӗнчӗ. Спортплощадка хăçан пулассине кăсăкланчӗ. Ку енӗпе ӗç пырать. Республика кунӗ тӗлне картишӗнче спорт площадки пулать. Ача-пăча площадкинче те шăпăрлансем выляма пуçлӗç ку вăхăта.

Ун хыççăн М. Игнатьев «Свобода» хуçалăхри çурхи ака-суха ӗçӗсемпе паллашрӗ. Чăнах та, кăçал çанталăк ял ӗçченӗсене уя час кăларманнине палăртрӗ. Çатракасси ял тăрăхӗнчи 11 пин таран йывăç лартса хăварнине ырларӗ. Вăл вырăнта пулса курчӗ. «Халь вӗсене пăхса тăрса чӗртсе, сыхласа хăвармалла», – палăртрӗ Михаил Васильевич.

Тӗл пулура район администрацийӗн пуçлăхӗпе Р. Тимофеевпа республика Пуçлăхӗ М. Игнатьев çивӗч ыйтусене çӳтсе яврӗç, вӗсене татса памалли çулсене палăртрӗç.

Республика Пуçлăхӗ Муркаш районне килсе кайнипе кăмăллă юлчӗ.

**Л. ТУКТИНА.**

# Тайма пуç сире, ветерансем!

**(Вӗçӗ. Пуçл. 1-мӗш стр.)**

Муркаш шкулӗнче вӗренекенсем вăрçă участникӗсемпе тыл ӗçченӗсене чечексем, шарсем пачӗç, сăвă-юрă парнелерӗç.

Хыççăн çамрăк армеецсен парачӗ иртрӗ. Муркаш шкулӗнче вӗренекенсем, ачасен Муркашри искусство шкулӗн, лицей воспитанникӗсем пуханнисене хайсен пултарулăх номерӗсемпе савăнтарчӗç.

Аслă Çӗнтерӳ кунне халалланă уяв митингӗ Çӗнтерӳ паркӗнче вилнӗ салтаксене асăнса лартнă палăк, Мухтав монументӗ умне гирлянда тата чечек кăшăлӗсем хунипе вӗçленчӗ.

Ытти ял тăрăхӗсенче те çав кун Аслă Çӗнтерӳ тунăранпа 67 çул çитнине савăнăçлă уявларӗç, вăрçă ветеранӗсене, тыл ӗçченӗсене чысларӗç, художество пултарулăх ушкăнӗсем хайсен юрри-ташшипе, концерт программисемпе савăнтарчӗç.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

**Аслă Çӗнтерӳ митингӗнчен**



**Сăн ӳкерчӗкре: район центрӗнчи уяв митингӗн саманчӗ.**

**Автор сăн ӳкерчӗкӗ.**

**ХИСЕПЛӖ ЕНТЕШӖМӖРСЕМ!**

Сире ырă та сутă уяв – Пӗтӗм тӗнчери çемье кунӗ ячӗпе саламлатăп!

Çемье, атте-анне килӗ – кашни çын кун-çулӗн никӗсӗ. Шăпах юратнă кил-йыш этеме кăмăл-сипетпе ырă витӗмне аша хывма, çынсене хисеплеме вӗрентсе ӳстерет, тăван халăх культурипе пуçласа паллаштарать. Çемьере кăна çын чăн-чăн юратупа аялану, пӗр-пӗрне хисеплени тата пулăшса пыни пурнăçра мӗн тери пӗлтерӗшлине туйса илет.

Кашни ăру ун хыççăн килекеннисем лайăхрах, ырăрах, тӳрӗ кăмăллăрах, ăслăрах, ăс-хакăл тӗлӗшӗнчен пуянрах пулнине курма ӗмӗтленет. Лайăх та çирӗп çемьере ачасем таврари тӗнчене кирлӗ пек хакласа йышăнма, ăслăн шухăшлама тата йывăрлăхсене çӗнтерме, ырра ырăпа таврăрма, унпа пӗрлех телейлӗ пулма, йăл кулăшăн, тăван çӗр тараватлăхӗшӗн савăнма тата çут çанталăка юратма хăнăхса ӳсеççӗ.

Паллă çутта кăларакан̆ăмăр И.Я. Яковлев пире çакăн пек пил парса хăварнă: «Çемйӗре лайăх пăхса усрăр, çемье вăл халăх чаракӗ, патшалăх чаракӗ». Чăваш Енре çемье институтне тата çемье хаклăхӗсене çирӗплетме пулăшакан политика приоритетлисенчен пӗри пулса тăрать. Республикăра çамрăк çемьесене пурăнмалли условисене лайăхлатма пулăшасси ырă йăлана кӗнӗ, нумай ачаллисене çурт-йӗр лартма е хуçалăх тытса пыма çӗр лаптăкӗсене тӳлевсӗр уйăрса паратпăр, виççӗмӗш ача çуралсан е усрава илсен республикăра амăшӗн 100 пин тенкӗлӗх капиталӗпе тивӗçтеретпӗр. Çемье институтне пулăшмалли майсене малалла та вăйлатса пырасси пирки иккӗленместӗп.

Çунатлă çакăн пек сăмах çаврăнăшӗ пур: «Телей вăл – ирхине ӗçе, каçхине вара – киле, çемье патне чун туртни». Çак пӗрре пăхма ансат туйăнакан сăмахсенче тарăн шухăш пытаннă. Чăваш Енре пурăнакансене пурне те çавнашкал телее сунатăп. Сирӗн тата сирӗн çывăх çыннăрсен сывлăхӗ çирӗп пултăр, кашни çемьерех тăнăçлăхпа çураçу тата çителӗклӗх хуçалантăр!

**Чăваш Республикин Пуçлăхӗ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

**ХИСЕПЛӖ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Пӗтӗм тӗнчери çемье кунӗ ячӗпе ăшшăн саламлатăп.

Çемье кашни çын пурнăçӗнче пысăк пӗлтерӗшлӗ вырăн йышăнать. Вăл мӗнле пуласси шăпах килте ашшӗпе амăшӗ ачана мӗнле воспитани парса ӳстернинчен пуçланать. Çемьерех ача пурнăç илемне курма, унăн тӳнтер енӗсене уйăрма вӗренет. Вăл хăйӗн пурнăç çулне те çемьере чухнех суйласа илет. Çавăнпа та пирӗн, аслисен, тăван кил ачасемшӗн çӗр çинчи чи çывăх та чун туртнă вырăн пултăр тесе хамăртан килнине йăлт тумалла. Вӗсем пире курса ырă ӗçсем ытларах тучăр тесе тимлемелле. Килте чи çывăх çынсем кӗтни, вӗсем пире юратни пурнăçри йывăрлăхсене те çӗнтерме вăй хăварт парать.

Çемье телейӗ вара пирӗнтен хамăртанах килет. Пур-çукшăнах вăрçăнса, харкашса пурăнса вăхăта сая ярас марччӗ. Пӗр-пӗрне юратсан та, пӗр-пӗринпе вăрçăнса пурăнсан та – ӗмӗр пурпӗрех иртет. Çемьере туслă пурăннине нимӗн те çитмест. Çемьери килӗшӳ хамăр ачасен пурнăç çулне те уçсах пырать.

Юлашки вăхăтра патшалăх ачаллă çемьесене нумай пулăшать. Апла пулин те ачасемшӗн чи хакли – ашшӗ-амăшӗн юратăвӗпе кил ăшши пулнине асра тытса пурăнмалла пултăр сирӗн. Çемйӗрсенче яланах телей йăл култăр, инкек-синкек пăрăнса ирттӗр. Пурне те çирӗп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп.

**Район администрацийӗн пуçлăхӗ**
**Р. ТИМОФЕЕВ.**

**Шурча вăрçине халалласа...**

# Викторина

Шурча вăрçи пулнăранпа 170 çул çитнине халалланă викторинăна Шурча шкулӗ иртерет. Унта шкул ачисем хутшăнаççӗ. Викторина икӗ ӳсӗмри шкул ачисем хушшинче пулать: 5–7-мӗш тата 8–9-мӗш классенче вӗренекенсем хушшинче. Викторина ыйтăвӗсем çине хуравсене майăн 20-мӗшӗччен ярса памалла. Çӗнтерӳçӗсене Ярапайкасси ял тăрăхӗн администрацийӗн дипломӗсемпе тата Шурчари вулавăшăн парнисемпе чысласçӗ, кашнинех викторинăна хутшăннине палăртакан сертификат парӑççӗ.

# Ӳкерчӗксен конкурсӗ

Шкул ачисем хушшинчи ӳкерчӗксен конкурсӗ майăн 1-мӗшӗнчен тытăнса майăн 20-мӗшӗччен пырать. Ăна 1–4-мӗш, 5–8-мӗш тата 9–11-мӗш классенче вӗренекенсем хушшинче уйăрмăшар ирттереççӗ. Ӳкерчӗксене майăн 20-мӗшӗччен тăратмалла. Çӗнтерӳçӗсемпе призерсен дипломсене, грамотăсене, парнесене тивӗçеççӗ.

Викторинăпа конкурс условийӗсемпе, положенийӗсемпе тӗплӗнрех Шурчари пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан тӗп шкулăн сайтӗнче паллашма пултаратăр.

**Объявления**

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:031001:210, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Дипломатова Галина Ивановна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Чебелькасы, ул. Центральная, д. 11.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:031001:210. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Волга», земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:031001.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:061901:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Портнова Татьяна Петровна, адрес: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Вурманкасы, ул. Приволжская, д. 31.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:061901:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Сундырский», земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:061901.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

# Эмелпе те, ăшă кăмăлпа та пулăшаççĕ

Паян – медицина сестрисен кунĕ



***Чирлĕ çынсене сиплес ĕçре вăтам персоналăн тӳпи пысăк. Врач палăртнă сиплеве ăста пурнăçласа пынипе пĕрлех медицина сестрисем ăшă кăмăллă пулни те пĕлтерĕшлĕ. Чирлĕ çынна тимлĕх уйăрма та пĕлмелле-çке-ха.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Эльза Ивановна Авиловăпа Анна Валериевна Федорова шăпах çавăн йышшисенчен. Тăрăшуллă медицина сестрисем районти тĕп больницăри терапи уйрăмĕнче вăй хураççĕ. Иккĕшĕн те ĕç стажĕ çирĕм çултан иртнĕ. Ăста специалистсем – аслă категориллĕ медицина сестрисем. Çавăнпах вĕсенчен çамрăксем ĕçе вĕренсе пыма тăрăшаççĕ те.***

***М. ШАРАПОВА***
***сăн ӳкерчĕкĕ.***

Шурча вăрçи пулнăранпа 170 çул çитнĕ май

# Халăх пусмăрçăсене хирĕç çĕкленнĕ

**Пирĕншĕн 1842 çул хресченсен Шурча таврашĕнче пулса иртнĕ пăлхавĕпе паллă. Ун чухнехи событисем историе «Шурча вăрçи» ятпа кĕрсе юлнă. 170 çул каялла пулса иртнĕ ĕçсем халĕ те пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ.**

Вăл вăхăт пирки çавна каламалла. Ун чухне чăвашсем калама çук чухăн пурăннă. Ялсенче улăм витнĕ пĕр-ик чӳречеллĕ пĕчĕк хура пӳртсем сапаланса ларнă. Çемьери çын шутне пăхса тӳлемелли хырçă укçи çуллен пысăкланса пынă. Тыррине те нумай памалла пулнă. Кусемсĕр пуçне чиркӳ валли те панă, вăрманшăн та тӳленĕ. Вулăсри е уесри пуçлăхсем хресченрен ултавпа сахал мар укçа пуçтарнă.

Пирĕн тăрăхри чăвашсем патшалăх хресченĕсем шутланнă. Патша правительстви 1838–1842 çулсенче патшалăх хресченĕсем çине татах çĕнĕ йывăрлăхсем «тиеме» тытăннă. Хресченсен ахаль те çителĕксĕр çĕрĕнчен 1/16 пайне патшалăха уйăрса памалла пулнă. Çавăн пек обществăлла ака валли патшалăх чи паха çĕрсене касса илнĕ. Çав çĕрсене тӳлевсĕр сухаласа-акса, тыррине вырса-çапса памалла пулнă. Халăх обществăлла çĕр тенине касса парасшăн пулман.

1842 çулхи майăн 14-мĕшĕнче Чикме уесĕнчи Шурча вулăсĕнчи хресченсем пăлхав пуçлани çинчен Хусан кĕпĕрнаторне донесени çырса пĕлтернĕ. Çавăнтах Шурча хресченĕсем хăйсене ӳкӳтлеме пиккенĕ священнике хĕнесе пĕтерни çинчен хыпарланă.

Кĕпĕрне пуçлăхĕсем пăлхава пусарма тесе Шурчана Поль полковник ертсе пыракан салтаксемпе казаксен отрядне янă. Майăн 19-мĕшĕнче Поль полковник Хусанти çар кĕпĕрнаторне Шурчана ирхине 9 сехет тĕлнелле тĕрлĕ уессенчен 5 пин çынна яхăн пухăнни çинчен пĕлтернĕ. Хресченсене икĕ сехет хушши ӳкĕтленĕ пулин те, вĕсем килĕшмен, йĕркене ĕлĕкхи пекех хăварма ыйтнă. Хресченсене вăйпа хăратса пăхăнтарма тытăнсан вĕсем хирĕç тăнă. «Пăлхавçăсене прикладсемпе çапа-çапа ураран ӳкерсе çыха-çыха хума тиврĕ», – пĕлтернĕ полковник хирĕç тăру пирки. Çапла 464 çынна пĕр çĕре çыхса хурса хурал тăратнă.

Тепĕр кунне, майăн 20-мĕшĕнче, çав çынах çар кĕпĕрнаторĕ Шипов генерал патне Шурчари çинчен пăлхавне пусарни çинчен çĕнĕрен рапорт çырнă. «Ĕнер ашкăннăшăн çыхса хунă хресченсене наказани пама тытăннăччĕ кăна, Шурчана хĕç-пăшаллă хресченсен пысăк ушкăнĕ çывхарса килнине пĕлтерчĕç, – тенĕ рапортра вăл. – Çав халăх ушкăнне Шурча патне çитиччен çур çухрăмра тытса чартăмăр. Каялла кĕпер урлă каçнă чух хресченсене шыва хăваласа кĕртес тесе эпĕ хам çынсене вĕсене хупăрласа илсе тапăнма хушрăм. Пăлхавçăсем салтаксемпе казаксене вăйлăн çапма пуçларĕç. Салтаксем пăшалсенчен печĕç...».

Халăх икĕ еннелле тарма пуçланă. Пĕрисем Оринин (Атапай), теприсем вăрман патнелле. Çавăнтах Поль полковник çĕнĕрен çар çыннисем, казаксем ярса пама ыйтнă.

Пăлхав Шурчара çеç пулман. Пăлхава таврари пиншер патшалăх хресченĕ хутшăннă. Шурчара 8 пин çын пулнă. «Уйрăмах Чикме уесĕнчи хресченсем чăрсăр хирĕç тăнă», – палăртнă тĕрлĕ донесенисенче.

Çак çапăçура 46 хресчен вилнĕ тесе пĕлтереççĕ официаллă документсенче. Аманса аякка тарса ӳксе вилнисене никамах та шута илмен.

Майăн 19-мĕшĕнче тытса чарнисенчен 30 çынна çаппа-çарамас хăварса икĕ рет тăнă салтаксен стройĕ витĕр тимĕр хулăпа хĕнетерсе кăларнă. Ыттисене авăн çапнă чух кĕлтесене сарнă пек хурса тухнă та хулăпа кашнине 500-шер хут çапса ислетнĕ. Вилнисене нӳхреп евĕр чавнă шăтăка кайса йăвантарнă. Пăлхавăн иккĕмĕш кунĕнче тытнисене тата килĕсенчен тытса пынисене çар сучĕ айăпланă.

Шурчара Поль полковник аллинче 600 ытларах салтакран тăракан хĕç-пăшаллă ушкăн пулнă. Мандрыка генерал пырса ыйтнипе 120 салтакран тăракан тепĕр ушкăн илсе килнĕ. Уйрăм ушкăнсем ялсем тăрăх пăлхавçене пусарса çӳренĕ.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

**Н. ТЮРИНА,**
**Шурчари шкул музейĕн ертӳçи.**

Социализмла Ĕç Геройĕ Е.А. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май

# «Чăн-чăн çынахчĕ вăл»

**Районта Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Аслă ăрури çынсем Евтихий Андреевича паян та ырăпа асăнаççĕ. 6 класс пĕтернĕ ертӳçĕ хуçалăха республика шайĕнче малтисен ретне кăларма пултарнă. Пултаруллă ертӳçĕ пулнипе пĕрлех Е. Андреев чăн-чăн çын пулнине, вăл хăйне нихăçан та мăнна хуманнине палăртаççĕ вăл вăхăтри çынсем. Çакă аса илӳсенчен те курăнать.**

– Евтихий Андреевич ертӳçĕ пулса тăрсанах çав тери тăрăшса ĕçлеме пуçларĕ. Мана пĕр пысăк бригадăсенчен пĕрне ертсе пыма шанчĕç. Куннесĕрне пĕлмесĕр ĕçлеттĕмĕр. Машина тавраш çукчĕ. Кашни кун Евтихий Андреевич лашапа фермăсене çитсе çавранатчĕ. Лашапах çĕр улми те лартаттăмăр. Ĕçе ирирех тухаттăмăр.

Вырма вăхăтĕнче çĕрĕпе ĕçлеттĕмĕр. Пире, бригадирсене, вăл малта пыракан хуçалăхсен опычĕпе плашшма илсе каятчĕ. Кайран пĕрле сӳтсе яваттăмăр. Хамăра кирлине суйлаттăмăр.

Вăл ĕçленĕ вăхăтра колхозниксен пӳлме тулли тырă пулнă. Ĕç кунĕшĕн укçапа кăна мар, тырă-улмăпа та тӳленĕ. Хăй вăл питĕ сăпайлăччĕ. Хăйне валли сурт лартнă чух çапла каларĕ: «Ялти чи пысăк суртран пĕр метр чухлĕ пĕчĕкрех пултăр вăл» – терĕ. Ĕç кунĕшĕн паракан тыррилăмне те пĕр ĕне усрамалăх çеç илетчĕ. Ыттине йăлт колхоза хăваратчĕ. Колхоз шучĕпе пуяс шухăш ун пĕрре те пулман, – ку вăл Викентий Волков аса илĕвĕнчен.

Николай Оньков асĕнче вара Евтихий Андреевич çапла юлнă:

– Эпĕ машинăпа турттараттăмччĕ Евтихий Андреевича. Ир-ирех уйсене, фермăсене, стройка вырăнĕсене çитсе килетчĕ. Мана кашни кун лаша-ĕнесене шутлама хушатчĕ. Пĕр пуç та хушма-чакарма çукчĕ. Йăлт пĕлетчĕ, мĕншĕн тесен хăй манран маларах та шутласа хунă иккен.

